25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 АВГУСТ 9 ВЫРСАРНИКУН 185 (6120) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

МАЛТАНХИ ЧИ ПАХА ТЫРРА—ГОСУДАРСТВĂНА!

Çĕршывра фронта хĕçпăшалсем, апат-çимĕçсем кирлĕ. Çĕршыв тата фронт тырă, çăкăр ыйтаççĕ. Ленин çирĕм виççĕ çул ĕлĕкрех каланă сăмаха халĕ аса илни пихĕçатхинчен те вырăнлă: «тырăшăн пыракан кĕрешни вăл—социализмшăн кĕрешни».

М. И. Калинин ĕççынни депутачĕсен ялсоветĕсен председателĕсем патне янă çырура çапла калать: «Тырпулсене лайăх пухса кĕртни, апат-çимĕç продукчĕсене перекетлĕн тыткалани,—çакă вăл фашистла бандитсене хирĕç пыракан вăрçăра чылай пысăк çĕнтерÿ туни пулса тăрать. Уборка вăл—фронтри çапăçусемпе пĕрех». Çакна асра тытса, колхозниксем, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисем, ялхуçалăхĕнче ĕçлекен мĕнпур ĕççыннисем тырпулсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртес тĕлĕшпе пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеççĕ.

Фронтсенчен килекен çырусенче совет воинĕсем совет çыннисене тырла хастарлă ĕçлеме чĕнеççĕ. «Комсомол Чувашии» бронепоездăн экипажĕнчен çак кунсенче ВЛКСМ Обкомне çыру килчĕ. Çав çырура бронепоезд экипажĕ, хăй çĕршыв оборонинче пысăк вырăн йышăнса тăракан участока сыхлани çинчен çырса, пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсене çакăн пек тума чĕнет: «тырпула пĕр пăт та тăккаласа хăвармасăр пухса кĕртнипе, государствăна срокченех тырпул парса татнипе тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма пулăшăр!»

Колхозсен тата ĕçхресченĕсен пĕрремĕш заповечĕ—государство умĕнчи обязательствăсене тултарасси пулса тăрать. Çак обязательствăсене уйрăмах халĕ, çĕршывпа фронт апат-çимĕç ытларах ыйтнă чухне, вăхăтра пурнăçа кĕртмелле. Çакна пĕлсе тăрса, республикăра малта пыракан колхозсем кивĕ тырăранах 1942 çулшăн тырă параççĕ. Республикăра хатĕрлев пункчĕсене виççĕ пин тонна ытла тырă хывнă. Канаш районĕнчи колхозсем кивĕ тырăран кăçалхи обязательствăсен 20 процентне чухлĕ государствăна панă.

Чылай колхозсем кĕр тыррисене вырса пĕтерчĕç. Нумай колхозсем тырă вырнă вăхăтрах авăн çапаççĕ. Пĕрвайхи тырра государствăна парас ĕç пуçланчĕ. Вăрмар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем августăн 5-мĕшĕнче хатĕрлев пунктне 8 лавлă хĕрлĕ обозпа тырса 64 центнер хывнă. Августăн 6-мĕшĕнче çав районри «Дружба» колхоз хĕрлĕ обозпа тырса 22 центнер, Аслă Чакри Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз—20 центнер, Вăрманкассинчи Димитров ячĕпе тăракан колхоз—10 центнер тата ытти колхозсем те государствăна тырă пачĕç. Çапла вара, лайăх ĕçлекен колхозсем малтанхи тырра государствăна параççĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлев пункчĕсене парас тĕлĕшпе колхозсемпе совхозсене пилĕккунлăх заданисем туса панă. Çав задани колхоз правленийĕшĕн тата совхоз директорĕсемшĕн закон пулса тăрать. Çав задание пурнăçа кĕртме колхозри тата совхозри мĕнпур вăя мобилизацилемелле.

Государствăна тырпул тăратас ĕçе ăнăçлăн туса пырасси колхозра е совхозра авăн çапас, тырра типĕтес, турттарас ĕçсем мĕнле пынинчен килет. Тырă вырма тухнă хыççăн 5 кунран кая юлмасăр авăн çапас ĕçе тытăнмалла. Молотилкăсене талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлеттермелле. Чĕрĕ тата нÿрĕ тырăсене колхозсен, совхозсен вăйĕсемпе тата хатĕрĕсемпе типĕтес ĕçе организацилемелле. Анчах малта пыракан кăшпĕр колхозсенче те авăн çапма васкаманни курăнать. Кĕр тыррисене вырса пĕтернĕ хыççăн кăна çак ĕçе тытăнаççĕ. Çак çитменлĕхе халех пĕтермелле, авăн çапас ĕçе хак паманни пулмалла мар.

Колхозсенче транспорт бригадисем тумалла, çав бригадăсене правлени членĕсем ертсе пымалла. Çапах та уйрăм колхозсенче паянхи куна та транспорт бригадисем организацилемен-ха. Çавăн пек бригада пулсан та, унта урапасем, ут таврашĕсем çителĕклĕ мар. Çав çитменлĕхсене пĕтерсе, транспорт бригадисене кашни кун мĕн чухлĕ ялхуçалăх продукчĕсем турттармаллине кăтартса заданисем памалла.

Партипе правительство кăтартса панă тăрăх, кивĕ сушилкăсене юсассине тата çĕнĕ сушилкăсене августăн 1-мĕшĕнчен туса çитермеллеччĕ. Çапах та, чылай колхозсенче паянхи куна та сушилкăсем çук. Ку вара уйрăмах кăçал, çанталăк çумăрлă тăнă вăхăтра, колхозсене пысăк чăрмав кÿме пултарать. Çавăнпа та сушилкăсене туса хатĕрлеме, вĕсемпе туллин усă курма тăрăшас пулать. Тырпул парас ĕçе «Чи лайăх тырра—государствăна!» текен лозунгпа туса пымалла.

Совет Союзĕнчи çĕршер колхозсем Хĕрлĕ Çарăн тырпул фондне срокченех тырă хываççĕ. Кăнтăр Казахстанри хатĕрлев пункчĕсене вуншар пин пăт тырă Хĕрлĕ Çар фондне хывнă. Çак ĕçе тума пирĕн республикăра вара паян кунччен те тытăнман-ха. Партипе совет органĕсен çак ĕçе организацилес пулать.

Государствăна обязательнăй йĕркепе тырă тăратас плана тултарнипе пĕрлех, натуроплата тыррине те парса татас пулать. МТС ĕçĕшĕн колхозсене счетсем парас ĕçе вăхăтра туса пымалла. МТС директорĕсемпе политотдел начальникĕсен вĕсем колхозсене счетсем парассишĕн, колхозсем натуроплата парса татассишĕн ответлă пулнине манма юрамасть.

«Заготзерно» хатĕрлев пункчĕсенче большевикла йĕркелĕх туса çитермелле. Тырă леçме пынă лавсене складсем умĕнче нумайччен тытса тăмалла мар. Тырă леçме пынă колхозник, унта пырсан, ĕçрен пушă вăхăтра хаçатсем вулама, политикăллă ыйтусене лайăх ăнлантарса паракан агитатор каланине итлеме пултартăр.

ВКП(б) райкомĕсен, райсоветсен исполкомĕсен, Наркомзагăн районри уполномоченнăйĕсен, мĕнпур коммунистсен, партире тăман большевиксен халĕ малтанхи тырра государствăна парас ĕçе организацилес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлес пулать, социализмлă ăмăртăва анлă сармалла. Тырă парас ĕç мĕнле пынине кашни кунах тĕрĕслесе тăмалла. Хатĕрлев пункчĕсене кунран кунах нумайрах та нумайрах тырă пырса тăтăр.

Государствăна тырă параççĕ

ИЕПРЕÇ. (Телефонпа). Уборкăра малта пыракан колхозсем государствăна çĕнĕ тырă пама тытăнчĕç. «Заря», Димитров ячĕпе тăракан, «Большевик», «Чувашия» колхозсем хĕрсех авăн çапаççĕ, ыран-паянах вĕсем ыраш вырса пĕтереççĕ.

Ĕнер Димитров ячĕпе тăракан колхоз малтанхи хут çĕнĕ тырра государствăна леçсе панă. Паян чылай колхозсем йышлă лавсемпе государствăна тырă леçсе параççĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ÿкерчĕк çинче: Отечественнăй вăрçăн пĕрремĕш степеньлĕ орденĕпе наградăланă летчиксен ушкăнĕ (сулахайран сылтăмалла): майор Д. В. Чумаченко, старши лейтенант Е. И. Борисенко, капитан С. И. Швец, капитан Г. М. Рогозин, капитан В. И. Патрикеев тата майор И. Г. Тр[illegible]н.

Г. ШИРОКОВ фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Колхозниксемпе колхозницăсем! Хамăрăн пĕрремĕш тивĕçе пурнăçа кĕртер, государствăна тырпул вăхăтра парса татар!

Ыраш вырса пĕтертĕмĕр

ЕТĔРНЕ, августăн 8-мĕш. (Телефонпа). Паян пирĕн «Хĕрлĕ Октябрь» колхозăн тăват бригадисем те ыраш вырса пĕтерчĕç. Кĕрхи тырăсене вырса пухас ĕçре уйрăмах 1-мĕшпе 4-мĕш бригадăсенчи колхозниксем малта пычĕç. Вĕсем ыраша плана пилĕк кун çурăра вырса пухма палăртнăччĕ. Пурте пĕр çын пек тимлĕн ĕçленипе пула ыраша вĕсем пилĕк кун хушшинче пысăк пахалăхпа вырса пуçтарчĕç. Çапла колхоз ыраш вырас ĕçе пилĕк ĕç кунĕ хушшинче (августăн 7-мĕшĕнче) пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕ. 4-мĕш бригадăри Ядровкина, Мурзина, Ольга Охандеровăпа Александра Медведева тата ытти колхозницăсем те ĕç нормине кулленех 150-шар процент тултарса пычĕç.

Ĕçе тухнăранпах пирĕн колхозра бригадăсемпе звеносем тата уйрăм колхозниксем ăмăртса ĕçлеççĕ. Ĕç тухăçне хăпартма пĕрлешÿллĕ столовăй, ачасем валли ясли организацилерĕмĕр. Çавăн пекех массăллă-ăнлантарулла ĕç лайăх пулса пырать. А. Мурзина учительница тата комсомолка В. Ярандайкина юлташсем, уйра хăйсем те куллен тимлĕн ĕçленипе пĕрлех, колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе те ÿркенмесĕр, лайăх туса пыраççĕ.

Халĕ итем çине кĕлте турттаратпăр, авăн çапма тытăнтăмăр. Паянхи куна 50 центнер ыраш çапса хутăмăр та ĕнтĕ. Ыраш кĕлтине çийĕнчех турттарса капана кывса хурассишĕн тăрăшатпăр. Ыран малтанхи хут государствăна çĕнĕ тырă паратпăр.

Августăн 10-мĕшĕнче 2 жнейкăпа тата пĕр лобогрейкăпа кĕрхи тулла тата çурхи тырăсене вырма тытăнатпăр.

Ф. РОЖКОВ.

«Хĕрлĕ Октябрь» колхозăн председателĕ.

Колхозсем авăн çапма тытăнчĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 8-мĕш. (Телефонпа). Янчеллă ялсоветĕнчи колхозсем ыраш вырас ĕçе пысăк çĕкленÿпе туса пыраççĕ. Ĕнерхи куна ыраш вырас плана ялсовечĕпе 69 процент пурнăçланă, тăватă колхозран виççĕшĕ авăн çапма тытăннă.

«Новая сила» колхоз уйрăмах пысăк çĕкленÿпе ĕçлет. Колхозăн Данилов, Михайлов юлташсем ертсе пыракан бригадисем ыраша 5 кун хушшинче вырса пуçтарчĕç, паян колхоз ыраш вырса пухас ĕçе пĕтĕмĕшпех вĕçлет. Уборкăн тăваттăмĕш кунĕнче авăн çапма тытăннă, ыран государствăна малтанхи тырра пама колхоз 16 лавлă хĕрлĕ обоз организацилесе каять.

Уйрăм колхозниксемпе колхозницăсем куллен пысăк çитĕнÿсем туса ĕçлеççĕ. Уборка вăхăтĕнчи стахановецсен ретне А. Захарова, Е. Федорова, К. Кириллова, О. Семенова, А. Иванова колхозницăсем тăчĕç. Вĕсем ĕç нормине кулленех 150—160 процент тултарса ĕçлеççĕ. Тырă вырас ĕçе ватă колхозниксем те активлăн хутшăнса паха тĕслĕхсем кăтартса пыраççĕ. 70 çула çитнĕ колхозник Архип Васильев колхозра чи хисеплĕ çын. Вăл ватă пулсан та хăйĕн пĕтĕм вăйне ĕçе парать. Кунне вăл 70 тĕм ытла ыраш вырать.

Ялсоветĕнчи «Победа», «Прогресс», «Венера» колхозсем те уборкăри ĕçсене лайăх туса пыраççĕ. Жнейкăсемпе ĕçре кулленех туллин усă кураççĕ. Жнейкăсене ĕçсĕр лартас йăла пирĕн колхозсенче çук. «Победа» колхоз ыраш вырассине ыран-паянах вĕçлет. Бригадăсем государствăна валли тырă хатĕрлеççĕ, паянхипе иккĕмĕш кун ĕнтĕ авăн çапаççĕ. Çакăнпа пĕрлех ялсоветĕнчи колхозсенче вĕр акине ирттерме те тимлĕн хатĕрленсе пыраççĕ. Государство умĕнчи обязательствăна парса татнă хыççăнах колхоз чи паха тырра вăрлăххăх çапать.

Тырă кăçал калама çук лайăх. Ăна пĕр тăкаксăр пухса кĕртессишĕн кĕрешсе, колхозсем пучах пухас ĕçе те аван туса пыраççĕ. Кăçал пирĕн ялсоветĕнчи колхозсем вăтам шутпа пĕр гектартан 16-шар центнер тĕштырă пухса илме ĕмĕтленеççĕ.

Колхозсем августăн 11-мĕшĕнче çуртрисене вырма тухаççĕ. Нумай тырра кĕрепленлĕ çавасемпе вырма хатĕрленеççĕ.

Я. ЛЬВОВ.

Янчеллă ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Тăккаланчăксемпе кĕрешеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, августăн 8-мĕш. (Телефонпа). Тырăсене пĕр тăккаламасăр пухса кĕртесси пысăк ĕç. Вăхăтра вырнипе пĕрлех кашни бригада, звено хăйсем ĕçленĕ участоксенче ÿксе юлнă пучахсене пухма тивĕçлĕ. Ку тĕлĕшпе пирĕн районра уйрăмах вĕренекен ачасем, комсомолецсемпе çамрăксем лайăх ĕçлеççĕ. Комсомолăн Сĕнтĕрвăрри райкомĕ пуçарнипе чылай колхозсенче пучах пухас ĕçе йĕркеленĕ. «Красный Волгарь» колхозри отрядра 17 ача тăрать. Вĕсем уя ирех тухса каçчен нумай пучах пухма ĕлкĕреççĕ.

Çакăнпа пĕрлех тăккаланчăксене хирĕç колхозниксем те кĕрешеççĕ. «Красная звезда», «Коминтерн» тата ытти колхозсенче те звеносем тырă вырнă хыççăн ÿксе юлнă пучахсене кĕреплесемпех тĕплĕн пуçтараççĕ. «Красная Армия» колхозра пучах тата улăм пухнă çĕрте лашапа ĕçлемелли кĕреплесемпе те усă кураççĕ.

Паянхи куна районра вунă колхоз ытла авăн çапаççĕ, государствăна тырă пама хатĕрленеççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз ĕнер пăрса çулса пухса кĕнĕ.

ВЛКСМ Сĕнтĕрвăрри райкомĕ районри колхозсенче уборка вăхăтĕнче ĕçлеме агитбригада организациленĕ. Бригадăра хула активĕнчен 15 çын ĕçлет. Çак кунсенче бригада 7 колхозра пулма ĕлкĕрчĕ. Бригада членĕсем колхозниксене хаçат-журналсем вуласа параççĕ, докладсемпе калаçусем туса ирттереççĕ тата художествăллă вечерсем лартса параççĕ.

ВЛКСМ райкомĕн пуçарăвĕпех уборка вăхăтĕнче ĕçлеме хулари комсомолецсемпе çамрăксем, пурĕ 60 çынна яхăн, бригадăсене организациленсе колхозсене ĕçлеме кайнă. Вăл бригадăсем халĕ «Труд», «Малалла» колхозсенче хĕрсех тырă выраççĕ.

Н. БОРЗОВ,

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Комбайнер Михайлов икĕ кунта 40 гектар тырă вырнă

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 8-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Паянхипе виççĕмĕш кун ĕнтĕ машинно-тракторнăй станцин комбайнерĕсем колхозсенче тырă выраççĕ. Комбайнсем тырра лайăх вырса пуçтараççĕ. Ĕçе лайăх организаленипе пула тата машинăсене вăйĕпе туллин усă курнипе пула комбайнерсем ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ. Поляндайкинăри «Новая жизнь» колхозра ĕçлекен комбайнер Михайлов юлташ августăн 6—7-мĕш кунĕсенче хăйĕн комбайнĕпе 40 гектар ыраш вырнă.

Мăн Улхашри «Красноармеец» колхозăн уйхирĕсенче виçĕ комбайн ĕçлет. Комбайнсемпе вырас ĕçĕн мастерĕсем Медведевпа Чекменев юлташсем ĕнер кăнтăрла ĕçе тытăннă. Тĕттĕм пуличчен вĕсем талăкри ĕç нормине ирттерсе пурнăçланă.

Уборкăри стахановецсем

ЧКАЛОВСКОЕ. (Хамăр корр.). Колхозсен уйхирĕсенче пĕтĕм вăя хурса ĕçленипе коммунистсемпе комсомолецсем колхозниксене ĕçре пример кăтартса пыраççĕ, уборкăна пысăкрах хăвăртлăхпа тата пахалăхпа туса ирттерме хавхалантараççĕ.

Патăръел вăтам шкулĕнче вĕрентекен учитель, парти членĕн кандидачĕ А. Яковлев юлташ тырă вырнă çĕрте вĕренекен ачасен 15 çынлă звенине ертсе пырать, вĕсемпе пĕрле хăй те тырă вырать. Хăйĕн примерĕпе тата ĕçе лайăх организаленипе унăн звенинчи çамрăксем кулленех çурлапа ыраша 0,12—0,14-шер гектара çити вырса пыраççĕ. Звено членĕсем пĕр шухăшлăн, пĕрлĕхлĕн ĕçлеççĕ. Кăтартуллă ĕçпе вĕсем «Путь Ленина» колхоз правленийĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă.

Сталин ячĕпе тăракан колхозра учительница-комсомолка Клава Мартышкина ĕçлекен бригада ыраш вырнă çĕрте ĕç тухăçлăхне вăйлăн çĕклерĕ. Колхозницăсем çамрăк комсомолка ĕçĕ çине пăхса нумай хут лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Халĕ бригадăн кашни членĕ кулленех 0,16 гектар ыраш вырать, норма тăрăх 0,10 гектар вырмалла.

«Звезда» колхозра Эльбетов юлташ ертсе пыракан звенори кашни колхозница кулленех 0,18 гектар тырă вырать. Коммунист А. Валитов юлташ ертсе пыракан звено татах та тухăçлăрах ĕçлесе колхозăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Тырпула вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа пухса кĕртер

Пирĕн тăван çĕршыв пурăнса иртерекен хальхи йывăр кунсенче тырпулсене пухса кĕртес ĕç—вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи пысăк задача пулса тăрать. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вăраха яни—тăван çĕршыва тата фронта сиен кÿме пултарать.

М. И. Калинин çапла калать: «Кăçал тырпулсене лайăх пухса кĕртни мĕн пек паха пулнине тата çав ĕçе тăваканăн ответлăхĕ мĕн тери пысăк пулнине кашниех ăнланать пулĕ, тесе шутлатăп. Уйрăмах çакна калас пулать: çак ĕçе начар пурнăçа кĕртни хальхи вăхăтра совет халăхĕ тĕлĕшпе тÿррĕмех сутăнчăкла ĕç туни пулать».

Çуракине, утă çулас тата тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçсене ăнăçлăн пурнăçлани республикăри колхозсенче производствăллă тата политикăллă çĕкленÿ вăйланса пыни çинчен калать. МТС-сен ĕçĕ енĕпе пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата кĕртнĕ. Çак Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешесси Чăваш республикинчи ĕççыннисен чыслă ĕçĕ пулса тăрать.

Республикăри колхозсем нумайĕшĕ малтанхи кунсенчех тырпулсене пухса кĕртес ĕçе организованно туса пыма тытăнчĕç. Августăн 5-мĕш тĕлне республикăра кĕр тыррисене 78.531 гектар вырнă, 1941 çулта çав кун тĕлне 16.171 гектар вырнă пулнă. Çапла вара, кăçал тырпулсене пухса кĕртесси иртнĕ çултинчен хăвăртрах пулса пырать. Тырпулсене пухса кĕртме Вăрмар районĕ пĕр харăс тытăнчĕ. Унта августăн 5-мĕш тĕлне 6127 гектар вырнă, урăхла каласан, кĕр тыррисем вырас плана 56 процент пурнăçа кĕртнĕ. Çак район ялхуçалăх машинисемпе туллин усă курать. 6127 гектар çинчи тырпула пухса кĕртнĕ вăхăтра 5783 гектара жнейкăсемпе вырнă. Вăрмар районĕн уйхирĕсенче 153 жнейкăпа, 18 косилкăпа, 372 çавапа ĕçлеççĕ. Паллах ĕнтĕ, район руководителĕсем уборкăна иртерес ĕçре çăмăл машинăсем пысăк вырăн йышăнса тănине ăнланса илнĕ, вĕсемпе усă курса тырпулсене хăвăрт пухса кĕртессине пурнăçласа пыраççĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕç Хĕрлĕ Чутай районĕнче те начар мар пырать. Унта августăн 5-мĕш тĕлне 2.620 гектар вырнă, çакă вăл кĕр тыррисен мĕнпур лаптăкĕн 33,5 проценчĕ пулать. Ку районăн руководителĕсем уборкăн малтанхи кунĕсенчех çăмăл машинăсемпе вырассине организацилемен пулсан, каярахпа çак çитменлĕхе хăвăрт пĕтернĕ.

Уборкăн малтанхи кунĕсенчех уйхирте стахановла ĕçлекенсем палăрчĕç. Шăмăршă районĕнчи «Победа» колхозра Н. Сидоровпа Т. Концов машиноведсем пĕр кун хушшинче 14—15 гектар тырă выраççĕ. Вĕсем вырма шурăмпуç килсенех (ирхине 4 сехетре) тухаççĕ, хĕвел анса ларичченех ĕçлеççĕ, лашасене сменăсем тăрăх улăштарса кÿлеççĕ. Çав колхозрах 63 çулти Василий Кошкоров çавапа, 0,65 гектар, 62 çулти Х. Кузьмин 0,7 гектар çулаççĕ. Пăрачкав районĕнчи «Красногор» колхозри Шуралева пĕр кун хушшинче çавапа 0, 52 гектар çинчи тырра çулать. Вăрмар МТС-ĕн комбайнерĕ Ванюков юлташ пĕр кун хушшинче 25 гектар вырнă. Вăрмар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз кĕр тыррисене виçĕ кун хушшинче пухса кĕртнĕ. Çак колхоз авăн çапать, районра пуринчен малтан государствăна тырă панă. Республикăри малта пыракан çĕршер колхозсем кĕр тыррисене вырса пĕтерчĕç.

Уборкăн малтанхи кунĕсенче ĕçри çитменлĕхсем те палăрчĕç. Пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл—уйрăм колхозсен руководителĕсем тата хăшпĕр районсен руководителĕсем, тырă пулса çитмен тесе, уборкăна вăхăтра тухас ĕçе организацилеменни пулса тăрать. Çакă вара пурте ушкăнпа тырă вырма тухас ĕçе чарса тăнă. Тырă пулса çитнĕ участоксене суйласа выратпăр тесе, комбайнсемпе тата çăмăл машинăсемпе вырман. «Тырă чĕрĕ-ха», тесе вăхăтра уборкăна тухманни Элĕк районĕнче нумай пулнă, унта августăн 4-мĕш тĕлне те чылай колхозсем тырă вырма тухман. Çав куна Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри тата Ишлей районĕсенче кашнинче уборкăна тухман колхозсем 6-шар пулнă. Çак районсем тырă пулса çитсен икĕ-виçĕ куна усăсăр ирттернĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçри тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—уборкăра машинăсемпе ĕçлеме вăхăтра тытăнманни, уйрăм колхозсенче юриех машинăсемпе вырманни. Çапла, Шупашкар районĕнче 111 жнейка пулсан, августăн 4-мĕш тĕлне 20 жнейка кăна ĕçленĕ, 90 жнейка ĕçлемен. Районри çĕрĕç отделĕн заведующийĕ Васильев юлташ уборкăра машинăсемпе ĕçлессине кирлĕ пек йĕркелесе яма пултарайман. Çав вăхăтрах районри колхозсем августăн 2-мĕшĕнче массăллăн тырă вырма тухнă. Çав 90 жнейка кашни кун 450 гектар тырă вырма пултарнă, çапла вара усăсăр иртнĕ икĕ кунра 900 гектар çинчи тырра вырма май пулнă.

Элĕк районĕнче те жнейкăсемпе вырма кая юлса пуçларĕç. Августăн 4-мĕш тĕлне Жданов ячĕпе тăракан колхозра 2 жнейка ĕçлемесĕр ларнă. Çак колхозăн председателĕ Егоров юлташ: «Эпир жнейкăсене çуртрисене вырма сыхласа усратпăр», тесе каланă. Силин юлташ председатель пулса ĕçлекен «Безбожник» колхозра икĕ жнейка виççĕ кун хушши ĕнтĕ ĕçлемеççĕ. Унта алăпа тырă выракан 120 çын пĕр кун хушшинче 12 гектар кăна вырнă. Колхоз председателĕ пĕрмаях ÿсĕр çÿрет. Колхозниксем пурте уйхирте тăрăшса ĕçленĕ вăхăтра, миллионшар совет çыннисем тăван çĕршывшăн юн тăкса кĕрешнĕ вăхăтра ÿсĕр çÿрени тăван çĕршыв умĕнче преступлени туни пулать. Молотов ячĕпе тăракан колхозпа «Звезда» колхозра та машинăсемпе ĕçлемен. Районри çĕрĕç отделĕн заведующийĕ Иванов юлташ уборкăна машинăсемпе тырă вырас ĕç çавăн пек пулса пынине пĕлет-ши? Машинăсемпе ĕçлеменни колхозсен тата государствăн интересĕсене хирĕç пынине Ивановăн ăнланса илес пулать, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе кирлĕ пек организацилесси çине ытларах çаврăнса пăхмалла. Тырă вырас ĕçре çăмăл машинăсемпе тата çавасемпе ытларах усă курас пулать.

Комбайнсемпе ĕçлеме те питĕ сÿрĕккĕн тытăнчĕç. Çапла, августăн 5-мĕш тĕлне Ишлей, Канаш, Элĕк, Шупашкар, Комсомольски МТС-сенче комбайнсене тĕрĕслесе пăхас ĕçсене кăна туса пынă-ха. Çак МТС-сен директорĕсем: комбайнпа вырма тырă пулса çитмен, тесе хĕрсе ĕçлемелли вăхăта усăсăр ирттернĕ. Çав вăхăтрах ыраш пĕтĕмпех пиçсе çитнĕ пулнă, ăна комбайнпа вырма май пулнă.

Çакна асра тытас пулать: çанталăк август уйăхĕнче çумăрлă пулма пултарать, пĕр куна мар, пĕр сехете усăсăр ирттерни те тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вăраха яма, тырă усăсăр пĕтесси патне илсе пыма пултарать.

Тырпулсене çăмăл машинăсемпе пухса кĕртнĕ чухне вырса тăкнă тырра çав кунах çыхса çĕмеле хывса пымалла. Тырпулсене вырас, капана хывас тата авăн çапас ĕçсене пĕр вăхăтрах туса пымалла. Авăн çапас ĕçе вăхăтра туса пыманни государствăна тырă тăратас ĕçре чăрмав пулма тата тырă нумай тăккаланма пултарать.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре ĕç вăйĕпе тата туртăм вăйĕпе тĕрĕс усă курни çавтери пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кашни колхозрах ĕçлеме пултаракан çынсем пурте, вăл шутра ачасем те, юбязательно производствăра ĕçлемелле. Колхозри мĕнпур çынсемпе ĕçре тĕрĕс усă курсан, пысăк тухăçлă тырпула вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕртме пулать.

Колхозсен председателĕсемпе çĕрĕç органĕсен руководителĕсен халĕ уйхирте ĕçлекенсем хушшинче ĕçе организацилеме тăрăшмалла. Уйхирте ушкăнпа апатланас ĕçе организацилемелле. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозра тырă выракансем уйхиртех выртса тăраççĕ, апат хатĕрлеççĕ. Пур колхозсенче те уйхирти стансене организацилемелле. Колхозницăсем ĕç вăхăчĕпе туллин усă курса ĕçлеччĕр. Çав шутпа кашни колхозрах ача яслисемпе площадкăсем уçмалла.

Тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлекенсене ĕçшĕн тĕрĕс тÿлемелле тăвас пулать. Ĕçкунĕ нумайрах тăвасси общесвăллă интереспа колхозниксен харпăрхăйĕн интересĕсене çыхăнтарса тăрать. Ĕçкунĕнче колхозник колхоз стройĕн вăй-хăватне курать тата ĕçкунĕсем нумай туни ĕçре ытларах усă кÿнине пĕлсе тăрать. Ĕç кĕнекисем çине çырнă ĕçкунĕсем колхозниксен патриотизмне палăртса тăраççĕ. Кăçалхи уборкăра ĕçленĕшĕн ĕçкунĕсем мĕнле çырса пырасси çинчен, ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленинче тунă йĕрке çинчен колхозниксене пурне те ăнлантарса парас пулать.

Ĕçкунĕсем тăрăх тырпулсене аванс йĕркипе парасси уборкăна хăвăрт ирттернинчен тата государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçласа пынинчен килнине колхозниксемпе колхозницăсем пурте ăнланса илччĕр.

Колхозсен правленийĕсен, счетоводсен тата бригадирсен ĕçкунĕсене тĕрĕс тата вăхăтра шута илсе пырас пулать. Кашни эрнерех кам мĕн чухлĕ ĕçкунĕ туни çинчен ведомость тумалла, партипе правительство тунă йĕрке тăрăх колхозниксене аванс памалла.

Н. МАЛОВ.

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа хирĕç Клетская районĕнче, Котельниковăран, Армавиртан çурçĕререх вырăнсенче тата Кущевскаяран кăнтăрарах вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пĕлтерĕшлĕ улшăнусем пулман.

Пирĕн карап Балтика тинĕсĕнче противникăн 10 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Августăн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăсĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 50 çити танкĕсене бронемашинисене, войскăсемпе грузсем турттаракан 200 çити автомашинине, боеприпассем тиенĕ 50 лапке, горючи тултарнă 6 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитлă артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă, чугунхуçа çинчи составсем çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 2 батальона çити салатса янă, тĕп пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен темиçе атакине сирсе янă. Н-ски чăсĕн оборона тумалли [illegible] гитлеровецсем, 8 танк тата 350 салтакпе офицер пĕтнĕ. Клетскаяран кăнтăрарах вырăнта, Н-ски гвардейски соединени участокĕнче хаяр çапăçусем пуçланнă. Юлашки кунсенче гвардеецсем противникăн танкĕсен 17 атакине сирсе янă тата нимĕçсен 100 танкне ытла пĕтерсе тăкнă. Стрелковăй подразделенисем пехотăн тата артиллерирен пенипе пĕр кун хушшинче кăна 500 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

Котельниковăран çурçĕререх районра [illegible] вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Белая Глинăран кăнтăрарахри районра пирĕн боецсем наступлени туса пыракан нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç темиçе кун хушши оборонăлла хаяр çапăçусем туса пынă. Н-ски соединени участокĕнче нимĕç танкĕсен колоннисене тата мотопехотине пирĕн боецсем артиллерирен пенипе [illegible]. Тăшманăн 40 çити танкĕ тата 1.000 ытла салтакпе офицерĕ пĕтнĕ. Çĕнĕ вăйсем илсе пырса тăратнă хыççăн нимĕçсем пирĕн позицисене çĕмĕрсе кĕнĕ. Противникăн йышлă вăйĕсене хирĕç [illegible] çапăçнă хыççăн пирĕн чăсем Армавир енелле оборона тумалли çĕнĕ рубежа [illegible].

Воронежран кăнтăрарах вырăнта пирĕн чăсем Дон шывĕ урлă каçнă. Советăн боецĕсем халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ. Венгерсен 7-мĕш дивизин пĕр чăсне çапса аркатнă. 12 орудипе тата ытти тĕрлĕ трофейĕсем тытса илнĕ.

* * *

Карели фронтĕнче противникăн разведка тăвакан групписемпе тытăçусем пулса иртнĕ. Гришин юлташ командир пулса тăракан чăсăн районĕнче тăшманăн салтакĕсен пĕр ротăна яхăн пирĕн боевой охранени патне çывхарнă. Пирĕн боецсем нимĕçсене çывăха янă та вĕсем çине пăшалсемпе пулеметсенчен пеме пуçланă. Темиçе вуншар салтакне вĕлерсе, хĕсĕннĕ гитлеровецсем каялла чакнă.

* * *

Подразделени командирĕ Книжкин юлташ ертсе пынипе пирĕн летчиксен ушкăнĕ тăшманăн аэродромне атакăланă, нимĕçсен 6 самолетне пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Сумы облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен С. юлташăн партизанла отрячĕ противникăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 50 вагон ванса пĕтнĕ. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем 1000 çын ытла вилнĕ тата аманнă.

* * *

Августăн 5-мĕшĕнче нимĕçсен 3 летчикĕ «Мессершмитт—109» йышши самолетсем çине ларса Хĕрлĕ Çар енне вĕçсе каçнă. Тыткăна парăннă лейтенант Бодо Хельме, унтер-офицер Курт Филипп тата рядовой Вернер Шумхер пирĕн оборона линийĕн районĕнчи площадкăсенчен пĕрин çине анса ларнă. Тыткăна парăннисен каласа панă тăрăх, вĕсем вырăс енне каçас тĕлĕшпе фронта килнĕ чухнех пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă. Бодо Хельме, Курт Филипп тата Вернер Шумхер [illegible].

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем совет Эстонин халăхне асаплантарса вĕлереççĕ. Пĕтĕм апат-çимĕçе гитлеровецсем Германие илсе тухса каяççĕ. Эстони хулисенче пурăнакан совет çыннисене куна 170-шер грамм çăкăр евĕрлĕ япала çеç параççĕ. Фабрикăсенчен нумайăшĕ ĕçлемесĕр тăраççĕ.

* * *

Гитлерла Румынири тата Венгрири тарçисем пĕр-пĕринпе усăнах хирĕçсе тăраççĕ. Венгрипе Румыни хушшинчи чикĕн пĕр участокĕнче, Клужпа Тыргу—Муреш хушшинчи вырăнта салтаксем хушшинче пăлхав пулса иртнĕ. Салонт пункчĕ патĕнче нумай пулмасть Румыни салтакĕсен пĕр роти чикĕ урлă каçнă та венгерсен чикĕри заставине пырса тапăннă.

Августăн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Августăн 8-мĕш ыран тенĕ çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Клетская районĕнче, Котельниковăран, Армавиртан çурçĕререх вырăнсенче тата Кущевскаяран кăнтăрарах вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пĕлтерĕшлĕ улшăнусем пулман.

* * *

Клетская районĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн чăсем, контратакăна куçса, халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 280 салтакпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 4 танкне çунтарса янă тата трофейсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра танксен çапăçăвĕ пулса иртнĕ. Совет танкисчĕсем противникăн 11 танкне пĕтерсе тăкнă. Н-ски соединени, противника хирĕç хаяррăн çапăçса, икĕ кун хушшинче 1.500 гитлеровецсем ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем пехотăн хĕçпăшалĕнчен персе нимĕçсен «Юнкерс—88» йышши самолетне ӳкернĕ.

* * *

Армавир районĕнче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă хĕрӳллĕ çапăçусем туса пынă. Противникăн шалалла шăтарса кĕрсе кайнă группировкине хирĕç çапăçса, нимĕçсен 17 танкне тата 48 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Кущевскаяран кăнтăрарах вырăнта совет танкисчĕсемпе кавалерисчĕсем нимĕç пехотин 2 батальонне çапса аркатнă.

* * *

Воронежран кăнтăр енче пирĕн чăçсем, Дон урлă каçнăскерсем, халăх пурăнакан татах та темиçе пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пунктсенчен пĕринче венгерсен пехотнăй чăçне çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур. Кӳршĕри участокра пирĕн боецсем гитлеровецсен батальонне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Брянск фронтĕнче противникăн пысăк мар отрячĕсемпе тытăçусем пулса иртнĕ. Участоксенчен пĕринче нимĕçсем пирĕн боевой охраненине, Шевалдин лейтенант ертсе пыраканскерне, атакăланă. Противникăн атакине сирсе пă-рахнă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 130 виллине пăрахса хăварнă. Вилнисем хушшинче икĕ обер-лейтенант тата 6 фельдфебель пулнă. Нимĕçсенĕн 2 миномет, 2 пулемет, автоматсемпе винтовкăсене тытса илнĕ. Совет 6 летчикĕ, Симонов лейтенант ертсе пынипе, нимĕçсен 10 танкне тата пехотăна боеприпассем турттаракан 25 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Могилев партизанĕсен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ уйăх çурă хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 1000 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Çав вăхăт хушшинче партизансем противникăн çар эшелонĕсене 7-шне ӳпĕнтерсе янă, танка тата грузсем тиенĕ 5 автомашина-на взрыв туса сирпĕнтерне.

* * *

Нимĕç салтакне Вернера Берлинран темĕнле Эдит ятлă хĕрарăм çапла çырать: «Мĕншĕн больницăсем скарлатинăпа тата дифтеритпа чирленисемпе тулса ларнă. Врач патне кĕме кĕтсе ларнă чухне приемнăйĕнче телейсĕр çынсене çавтери нумай куратăн, çакна пăхнипе хăруша пулса каять. Чирлĕ çын вилес хăрушлăх умĕнче тăрать пулсан та, ăна пурпĕрех больницăна йышăнмаççĕ, мĕншĕн тесен унта вырăн çук. Темиçе кун хушши ĕнтĕ больницăсенче тасату пырать. Сывалма шанчăксăр чирлисене пĕр хĕрхенмесĕр хăвала-хăвала кăлараççĕ; тăванĕсене больницăна аманнă салтаксене, Российĕрен килекенскерсене, вырнаçтармалла тесе калаççĕ».

* * *

Чехословаки патриочĕсем гитлерла захватчиксене хирĕç хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр, пĕр кунлăха та лăплантармасăр кĕрешеççĕ. Нумаях пулмасть Морава округĕнчи гестапо начальникне вĕлернĕ. Кладнори хурçă шăратакан заводăн цехĕсенче пĕр июль уйăхĕнче кăна 6 случай авари пулнă. Саботажа пула продукци туса кăларасси заводра 40 процент чакнă.

Пирĕн землякcем

ЛЕТЧИК-ИСТРЕБИТЕЛЬ

Никифор Игнатьев, Совет Союзĕнчи нумай çамрăксем пекех, тăван çĕршывшăн усăллă çын пулма тăрăшнă. Чи малтан Игнатьев Хурамалăхри пуçламĕш шкулта вĕренме тытăнать, кайранхи вăхăтсенче те вăл хăйĕн пĕлӳне ӳстерсе пырать.

Çĕршыв панă тулли ирĕклĕхсемпе усă курса, Игнатьев 1940 çулта авиаци училищинчен вĕренсе тухать. Комисси членĕсенчен пĕри, мухтава тухнă командир, ăна çапла каланă:

— Санăн куçсем аван. Санран лайăх летчик-истребитель пулать.

Игнатьев саванне Савăнмасăр, вăл, ачасен çуртĕнче ӳснĕскер, Совет влаçĕ воспитани панипе, летчик-истребитель пулать.

...Нимĕç фашисчĕсене хирĕç вăрçă пуçлансан Игнатьева Хĕрлĕ ялавлă Балти флотне яраççĕ. Хăйĕн «Чайки» çинче вĕçсе, вăл тăшмана хирĕç хăюллăн кĕрешнĕ, фашистсен çĕр çинчи чăçĕсене штурмланă, разведкăна кайнă.

Хĕл варринче ăна инçетри çурçĕре куçараççĕ. Хĕллехи вăхăтра нимĕçсен авиацийĕ пысăк активлăх кăтартман пулсан та, Игнатьевăн вĕçевсем тумалла пулнă. Тăшмана хирĕç вăл пĕр хутчен кăна мар çапăçусенче пулнă.

Кĕмĕл пек йăлтăртатса тăракан Заполярьери çуркуннехи пӳрĕ çанталăк тапхăрăн-тапхăрăн сивĕсемпе улшăннă. Тĕксĕм пĕлĕтсем сирĕлсе кайнă хыççăн, тăшман авиацийĕ тӳпере курăнма пуçланă. Противник пирĕн истребительсене тĕл пулнă. Сывлăшра çапăçу пуçланса кайнă. Çӳлте пулеметсен черечĕсем шăтăртата-шăтăртата илнĕ.

Акă, хĕрлĕ çăлтăрлă пĕр истребитель фашистла çăхан çине вăйлăн тапăнса пырать. Вăл çиçĕм пек хăвăрт пырса тивет, тăшман самолечĕ çинче вĕçет, юлашкинчен тăшман самолетĕнчен тĕтĕм тухма пуçлать—противник самолечĕ аялалла анать. Пирĕн «хурчăка» нимĕçсен самолетне çĕре ӳкерет. Анчах хăюллă пилот çине кĕçех гитлеровецсем тапăнаççĕ, ун çине пулемет черечĕсем тăкаççĕ... Самолета сиенлеççĕ.

Пирĕн летчик утрав çине анса ларать. Çĕмĕрĕлнĕ «хурчăка» патĕнче хура мĕлке курăнса кайнă. Утрав нимĕçсене, çывăх, пирĕн позицисем—инçерех. Летчикăн мĕн тумалла?

Сопка тăрринчен тăшман пилот çине пулеметран хаяррăн пенĕ. Пытанас тесе, летчик чупма тытăннă, çапла вăл чылай кайнă. Тăшман пулеметран пеме чарăнман. Летчик ӳкнĕ те çĕр çийĕпе шума пуçланă.

— Пулăшмалла, — йышăннă аякран пăхса тăракан краснофлотецсем.

— «Хурчăкана» çăлатпăр!—тенĕ кĕçĕн политрук, ун хыççăн вуннăн çав хăрушă вырăна кайнă. Моряксен пысăках мар группине ертсе, кĕçĕн политрук пăр çине кĕрсе кайнă. Хамăрăн хăюллă боецсене хӳтĕлесе, пирĕн пулеметсем хыттăн персе тăнă. Фашистсен пулемечĕсем те кӳллĕн тепĕр енчен вут-хĕм тăкнă. Моряксем, ниме те пăхса тăмасăр, пилота çăлас тесе, малалла пынă.

— Малалла, юлташсем! — кăшкăрнă кĕçĕн политрук.

Летчик вырăсла калаçнине илтнĕ те, унăн куçĕсенчен савăнăç куççулĕсем тумланă. Вăл пĕччен мар, юлташĕсем ăна çăлма пынă!

— Кам унта? —

— Лейтенант Игнатьев. Эпĕ аманнă.

— Кĕçех сан пата çитетпĕр!

— Аван, юлташсем, эп кĕтетĕп!

Пулеметран пени çаплах чарăнман. Анчах юлташĕсем Игнатьева чиперех илсе тухнă.

Игнатьев сывалса çитнĕ хыççăн каллех çапăçма тытăнать. Сталинла сокол, хурçă çунатлăскер, хăй пултаруллă пулнине кăтартнă.

Кашни кунах çапăçура, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине хирĕç кĕрешнĕ çĕрте иртот.

... Çуркунне пулнă. Игнатьев боевой задание пурнăçлама тухса каять. Вăл халăх пурăнакан пĕр пункт çине вĕçсе пыракан фашистсен самолетне курать. Сывлăшра тытăçу пуçланса каять. Игнатьев «Мессершмитт—109» çине атака тăвать, ăна персе ӳкерет. Ракета курăнсан, Игнатьев каллех çапăçу пулассине туять. Каллех çапăçу, каллех Игнатьев тăшманăн тепĕр самолетне пĕтерет.

Тепĕр çапăçура вĕсем улттăн пулнă. Ултă истребитель çине нимĕçсен 12 «Мессершмичĕ» тапăнаççĕ, вара танмар çапăçу пуçланса каять. Фашист, çул памасăр, Игнатьева хирĕç пынă. Игнатьев фашистсен машинине мĕнле пĕтермеллине аван пĕлнĕ. Пулеметран тăшман самолечĕн моторĕ çине черет кăларса янă та «Мессершмитт» çĕре персе аннă.

Сывлăшри атака хĕрсех пынă. Игнатьев татах тепĕр самолета пырса çапать, анчах летчик пичĕпе приборсем çумне çапăнать. Вăл аллине хăвăрт çĕклесе куçне хупăрласа лартать те пит çинчи юна шăлса илет, пĕтĕм вăйне пухса машинăна тӳрĕ тытма пуçлать.

Мотор ĕçлемен. Самолет сулахай енелле тайăлнă. Игнатьев унталла çавăрăнса пăхать те самолетăн хăшпĕр пайĕсем уйăрăлса каяс пек тăнине курать. Игнатьев самолетне чиперех антарса лартать. Çав вăхăтра Игнатьев ӳкернĕ «Мессершмитт» сопка çинче çунса выртнă.

Летчик хамăр чăçсем вырнаçса тăнă вырăна чупнă. Ăна тăшманăн пульлисем хăваласа пынă. 200 метр кайсан, Игнатьев сылтăм ури пĕçерсе кайнине туять те çĕр çине ӳкет.

Госпитальре выртнă хыççăн, Игнатьев каллех сывалса тухать. Фашистла захватчиксене хирĕç геройла кĕрешме тытăнать. Хăюллă сокол сывлăшри пиратсене пĕтерсе пырать.

Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ Никифор Игнатьев, 27 çултискер, çапăçу пуçланнă кунсенче лейтенант пулнă, кайран ăна старши лейтенант званине параççĕ. Халĕ унăн кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Ялав орденĕ çуталать.

Советски районри ĕççыннисем хăйсен паттăр землякне ăшă кăмăлпа асăнаççĕ.

ЯКОВ СИГАЙ.

Ют çĕршывсенче

Англи рабочийĕсем иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтаççĕ

ЛОНДОН, августăн 7-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Пысăк Лондонри рабочисен-машиностроительсен делегацийĕ ĕнер каçхине Даунинг-стритра (премьер-министрăн резиденцийĕнче) пулнă. Делегаци Черчилле послани панă. Çав посланире иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтнă. Çав делегацире 171 çын пулнă. Вĕсем столицăн промышленноçлă районне тата ун йĕри-тавраршне пĕтĕçтерсе тăракан Пысăк Лондонри 78 предприятире ĕçлекен 105.686 рабочин представителĕсем пулнă.

Делегаци панă посланире çапла каланă: «Гитлера Европăри икĕ фронтра çапса аркатма пулать, иккĕмĕш фронт пирĕнтен ыйтакан тивĕçлĕ жертвăсене тӳссе ирттерме эпир хатĕр. Мĕншĕн Совет Союзĕ кăна тӳссе ирттернине эпир малалла чăтса тăма пултараймастпăр. Пирĕн çĕршыв хăрушлăх умĕнче тăрать, пирĕн чысăх пирки ĕç сивĕч тăрать, лару-тăру вара çавтери йывăр. Иккĕмĕш фронта халех уçмасан, кайран вара çакă вăл питех те кая юлса тунă ĕç пулĕ. Эпир кĕрешме ыйтатпăр»

Франци халăхĕ оккупантсене хирĕç кĕрешет

ЖЕНЕВА, августăн 7-мĕш. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Францин чылай районĕсенче пысăк забастовкăсем тата Германие хирĕç массăллă демонстрацисем пулса иртеççĕ. Французсен вăрттăн тухакан «Ив Уврнер» хаçачĕ Сен тата Луара горнякĕсен 5.000 çынлă забастовки пуçланни çинчен пĕлтерет. Стачечниксем шахта администрацийĕн составĕнчен нимĕçсене хăваласа кăларма тата материальнăй условисене лайăхлатма ыйтнă. Брестри арсеналра ĕçлекен рабочисен, Германи çарĕ валли хĕçпăшал тăвассинчен пăрăннăскерсен, геройла кĕрешĕвĕ çинчен калакан хыпар пĕтĕм çĕршыв тăрăх сарăлнă. Асаплантарса вĕлерессипе хăратсан та, Франци патриочĕсем забастовкăна пăрахман. Германин оккупациллĕ влаçĕсем забастовщиксене хирĕç полицин тата çарăн пысăк вăйĕсене янă.

Рабочисем хирĕç тăрассине вĕсем юнлă çапăçу хыççăн кăна хавшатма пултарнă.

Çак кунсенче Парижра пысăк хумханусем пулса иртнĕ. Париж çыннисем ушкăнăн-ушкăнăн пухăннă та Дагер урамĕ тăрăх тата Орлеански аваню тăрăх кайнă. Халăх хушшинчен: «нимĕçсене Францирен хăваласа кăлармалла!», «Тĕп пултăр Лаваль правительстви!» тесе кăшкăрнисем илтĕннĕ. Çак вырăна полицин вăйлă отрячĕсем пырса çитнĕ, вĕсем халăх çине пеме тытăннă. Çакна хирĕç ответлесе халăх хушшинчен те пенĕ сасă илтĕнсе кайнă. Пĕр полицейские вĕлернĕ, иккĕшне йывăр амантнă. Çавăн пекех тата Германи салтакĕ те аманнă. Çакăн хыççăн çынсене массăллăн арестленĕ. Гитлеровецсем массăллă террорпа усă курса, Франци халăхĕ хирĕç тăнине хавшатма шутлаççĕ. Мĕнпур çĕршывĕпе кунсерен нумай патриотсене арестлеççĕ тата асаплантарса вĕлереççĕ.

Анчах арестленисем те, асаплантарса вĕлернисем те паттăр патриотсене чарма пултараймаççĕ. Оккупантсем тискер кайăкла хăтланнине хирĕç ответлесе, Франци патриочĕсем хăйсен çĕршывне гитлерла вăрă-хурахсенчен ирĕклĕхе кăларассишĕн пыракан кĕрешĕве татах та ытларах вăйлатаççĕ. Париж çывăхĕнчи Курбевуари авиаци заводне аркатнă, электрокабель пăсăлнă пирки пысăк агрегат стройран тухнă. Марсель портĕнче патриотсем горючин икĕ складне çунтарса янă.

Дорио шайккинчи пуçлăхсенчен пĕрине вĕлерни

ЖЕНЕВА, августăн 7-мĕш. (ТАСС). Парижран пĕлтернĕ тăрăх, çак кунсенче револьвертан персе Гашелэна—Дорио шайккин Сен тата Уаз департаментĕнчи пуçлăхĕсенчен пĕрине вĕлернĕ. Вĕлерекенни тарса пытаннă.

Шарлеруари фашизма хирĕçле демонстрацисем

ЛОНДОН, августăн 7-мĕш (ТАСС). Лондонра Бельги правительствин çынĕсем илнĕ хыпарсем тăрăх, нумаях пулмасть Шарлеруара (Бельгия) рексистсене хирĕç (Бельгири фашистсене хирĕç) тăвăллă демонстрацисем пулса иртнĕ. Рексистсем пурăнакан темиçе çурта çапа-çапа аркатнă. Рексистсене хӳтĕлеме Германи полицейскийĕсем тухнă. Рексистсем çине тапăннă çынсем тарса пытаннă. Оккупациллĕ влаçсем халăха хыттăн асаплантарассипе хăратаççĕ.

Англи авиацийĕ Рур çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, августăн 7-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: августăн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Рур çине вĕçсе пырса тапăннă. Тапăнмалли тĕп объект Дуисбург хули пулнă. Çавăн пекех противникăн Голландири аэродромĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Çав операцисенчен хăйсен базисене 6 самолет таврăнман.

Неприятелĕн йышлă мар самолечĕсем çав каçхинех Хĕвелтухăç Англири хăшпĕр пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Жертвăсен хисепĕ пысăк мар. Ишĕлтерӳсем нумаях мар.

Египет фронтĕнчи лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 7-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман. Йывăр бомбардировщиксем неприятелĕн Тобрукри тата Мерса-Матрухри суднисемпе фортри сооруженийĕсене атакăланă. Бомбăсем гидросамолетсен бази çине, нефть тултарнă баржăсем çине тата моторлă суднăсем çине леккине палăртнă. Икĕ пунктра та пушарсем тухнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, египет фронтĕнче икĕ енĕ те хăйсен чаçĕсене çĕнĕ вăйсем хушса парас тĕлĕшпе тата çапăçусенче сухатнă хĕçпăшала улăштарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Кăнтăр Италирен тата Триполирен Итали войскисене куçараççĕ; Крит утравĕ çинчен Тобрука Германин вăйĕсем пырса тăраççĕ. Нимĕçсем хăйсен танковăй вăйĕсене татах ура çине тăратаççĕ. Танксем тиенĕ баржăсем çыран хĕррипе нимĕçсен 15-мĕш тата 21-мĕш бронетанковăй дивизийĕсен малти позицийĕсем патнелле шăваççĕ. Çавăн пекех нимĕçсем суднисемпе пехотăна тата горючин çĕнĕ запасне турттарса пыраççĕ.

Окопсем тума тата минăсем лартса тухнă хирсем тума Роммель генерал приказ панă. Артиллери орудийĕсемпе танксене хирĕç пемелли тупăсене çĕнĕрен хушса вырнаçтарса лартаççĕ.

Англи войскисем хăйсен речĕсене çĕнĕ вăйсем хушса парса вăйлатас программăна малалла пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Танксен тата танксене хирĕç пемелли орудисен хисепĕ Англи çарĕнче тăтăшах ӳссе пырать. Англин Эль-Аламейн патĕнчи чаçĕсене Америкăн танковăй экипажĕсем кĕреççĕ.

Çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн кĕрешмелле

КАНАШ, августăн 8-мĕш. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри социализмлă ăмăртура мала тухнă цеха, сменăна тата бригадăна пама куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавсем тунă. Июнь уйăхĕнчи ăмăртура мала тухнăшăн хĕрлĕ ялавсене Токарев цехĕ, Маркова смени тата Капелюха бригади илнĕччĕ.

Июльре татах та кĕрӳрех ăмăрту пычĕ, хĕрлĕ ялавсене илессишĕн çĕнĕ цехсем, сменăсем, бригадăсем ăмăртрĕç. Вагонсем юсакан цех коллективĕ (начальникĕ Коломиец юлташ) июль уйăхĕнчи плана ытлашшипех тултарчĕ, çĕршывпа фронта планран ирттерсе продукци пачĕ. Цехри рабочисем виç уйăх хушши ĕнтĕ пурте нормăна туса ĕçлеççĕ. Иртнĕ уйăхра кашни рабочин ĕç тухăçлăхĕ вăтамран 228 процент пулнă. Çавсене кура, заводри июльри куçса çӳрекен хĕрлĕ ялава Токарев юлташăн цехĕнчен илсе, Коломиец юлташăн цехне пама йышăнчĕ.

Назаров юлташ ертсе пыракан цехри Маркова смени хăйĕн ĕç тухăçлăхне июль уйăхĕнче те чакармарĕ. Куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав çавăнпа унăн аллинчех юлчĕ.

Виççĕмĕш ялава Капелюха бригадинчен илсе, Чесов бригадине пачĕç. Чесов юлташăн бригади июльри задание чылай ирттерсе тултарнă, рабочисен ĕç тухăçлăхне 440 процента çитернĕ.

Цехсен, сменăсен тата бригадăсен июль уйăхĕнчи ĕçĕсене пĕтĕçтерсе тухни çакăн çинчен калать: хĕрлĕ ялав пĕр вырăнта тăмасть, вăл куçса çӳрет. Кам ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пырать, пĕрмай малалла каять—çавă çеç ялава хăйĕн аллинче хăварать. Çавăнпа та задача—тунă ĕçсемпе лăпланса лармалла мар, çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн кĕрешмелле.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

Вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн

ЙĔПРЕÇ, августăн 7-мĕш. (Телефонпа). Чугунçул транспорчĕ валли вутă касса хатĕрлес тĕлĕшпе Йĕпреç вăрманпромхозĕнче Шупашкар, Канаш, Октябрьски тата Йĕпреç районĕсенчи колхозниксемпе единоличниксем ĕçлеççĕ. Вăрман ĕçне уйрăмах Йĕпреç районĕнчи колхозниксем хар пухрĕç. Вĕсем 90 çын çуран, 50 çын лашапа ĕçлеççĕ, задание кашни кун ирттерсе тултараççĕ. Августăн 6-мĕшĕнче, сăмахран, задание 135 процент тултарнă.

Нумай пулмасть вăрманта ĕçлекенсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта вăрман хатĕрлес плана срокчен тултарасси çинчен сӳтсе яврĕç. Çав майпа рабочисем хушшинчи социализмлă ăмăртăва организацилеме йышăнчĕç. Йĕпреç районĕнчи рабочисем Канаш районĕнчи рабочисене ăмăртăва чĕнчĕç. Вĕсем вăрман хатĕрлемелли плана срокчен пĕр уйăх малтан тултарма, ĕç тухăçлăхне касас енĕпе 135 процента çити, турттарас енĕпе 150 процента çити ӳстерме пулчĕç.

Халĕ вăрманта ĕçлекенсем пысăк çĕкленӳпе тата пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Йĕпреç районĕнчи партин 17-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозран пынă С. Ашанин, В. Чураков юлташсем кулленех 3,5—4 кубометр вутă касса хатĕрлесе, нормăна 175—200 процент тултараççĕ. Вĕсем хăйсен заданийĕсене срокчен икĕ уйăх çурă малтан тултарма пулнă.

«Молния» колхозран пынă Илья Нарышкин, Н. Скутан юлташсем лашапа ĕçлеççĕ. Вĕсем халĕ икшер норма тултараççĕ, малашне виçшер норма тултарма пулаççĕ. Çавăн пекех «Красный фронтовик» колхоз членĕсем С. Иванова па П. Яковлев юлташсем те икшер норма тăваççĕ.

Шупашкар районĕнчи «Культура» колхоз членĕ Барилло юлташ механизациленĕ пăчкăпа кашни кун 3—3,5 кубометр вутă касса хатĕрлет, плана 1,5 хут ирттерсе тултарать. Вăл, ĕç техникине хăнăхса пырса, йывăç касас нормăна икĕ хут ирттерсе тултарма обязательство илнĕ.

Вăрманта ĕçлекенсен ĕмĕчĕ — паян ĕнерхинчен, ыран паянхинчен тухăçларах ĕçлесси.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебоксарская Чулочная фабрика принимает на временную работу и производит выдачу работы на дом по штопке чулочных изделий. Временные рабочие и работающие на дому обслуживаются столовой и ларьком фабрики.

Обращаться по адресу: Красная площадь, № 1, Чулочная фабрика, отдел кадров.

Утерянную круглую печать Кумашевского колхоза им. Сталина Вурнарского района считать недействительной.

Правление колхоза.

Чебоксарскому ликеро-водочному заводу требуются: начальник цеха, зав. базой, бухгалтера, плановик, шофер, тракторист, бондари, грузчики и чернорабочие.

Обращаться: гор. Чебоксары, Чувашская, 65, Ликеро-водочный завод.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 906 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.